Районти педагогсен августри конференцийĕнчен

Вĕрентӳ ĕçĕн пурнăçпа тан пымалла

Ытлари кун, августăн 25-мĕшĕнче, районти педагогсен йăлана кĕнĕ августри конференцийĕ иртрĕ. Конференци теми – «Çĕнĕ шкулăн вĕрентӳ тытăмне йĕркелекен механизма – вĕрентӳ пахалăхне ертсе пырасси. Çĕнĕ шкулăн экономики». Кăçал ăна ирттерессинче те çĕнĕлĕх пулчĕ. Малтанах учительсем тата конференцие чĕннĕ хăнасем секцисене пайланса тĕрлĕ шкулсене тухса ĕçлерĕç.

Шурча шкулĕ иртнĕ вĕренӳ çулĕн пĕтĕмлетĕвĕсемпе тĕп шкулсем хушшинче малти вырăна тухрĕ. С.В. Троицкая директор вĕрентӳ пайĕн ертӳçинчен диплом илме хавас.

Вĕрентӳ учрежденийĕсен директорĕсем Ярапайкассинчи вăтам шкулта «Пирĕн çĕнĕ шкул» наци вĕрентĕвĕн пуçарăвĕ» тавра калаçрĕç, унăн тĕп енĕсене тишкерчĕç. Ориннинти вăтам шкулта директорсен вĕрентӳ тата воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕсем паянхи пурнăç условийĕсенче ачасен социаллă опытне еплерех йĕркелесе пымаллипе ĕçĕнче проект мелĕпе усă курмалли çинче тарăннăн чарăнса тăчĕç. Катькасри пуçламăш шкул-ача садĕнче вĕсем малашнехи тĕллевсене палăртрĕç. Калайкасси шкулĕнче вара класс ертӳçисем пуçтарăнса «21 ĕмĕрти учитель» темăна сӳтсе яврĕç, тренингсене хутшăнчĕç.

Шомикри тĕп шкулти секци ĕçĕ те интереслĕ иртрĕ. Унта вĕрентӳ учрежденийĕсенчи ертсе пыракан тата попечительсен канашĕсен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем хутшăнчĕç. Калаçу вĕрентӳ ĕçне патшалăхпа общество енчен ертсе пырассин енĕсем тавра пулчĕ. Районти вĕрентӳ пайĕн попечительсен канашĕн ертӳçи Н.Г. Ванеркин тата Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн ертсе пыракан канашĕн председателĕ В.И. Кожанов хăйсен ĕçри опычĕпе паллаштарчĕç, çӳлерех асăннă канашсенче авторитетлă, пуçаруллă тата пулăшма пултаракан çынсем пулмаллине палăртрĕç. Шăпах çакнашкал çынсемпе пĕрле ĕçлесе пырсан шкулсен пурлăх базине пуянлатма тытăмĕпе тĕп задачисем пирки вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи З.Ю. Дипломатова хăйĕн докладĕнче каларĕ. Вăл нумайăшне канăç паман районти вĕрентӳ системине оптимизацилемелли планпа та паллаштарчĕ. Унпа килĕшӳллĕн Панклири тĕп шкул Йӳçкассинчи вăтам шкулăн пайĕ пулса тăрать, Очăкассинчи тĕп шкул пуçламăш шкул-ача сачĕ статус илет. Тойкилтĕри вăтам шкул та малалла тĕп шкулсен йышне кĕме тытăнать. Апчарти, Вăрманкассинчи филиалсем тата Тивĕшри пуçламăш шкул-ача сачĕ хăйсен база шкулĕсемпе пĕрлешеççĕ. Шкулсен паян нумай енĕсемпе малалла туртăнмалла, апла пулсан педагогсен те йăлана кĕнĕ вĕрентӳ форминчен пăрăнса çĕнĕ методикăсемпе ĕçлемелле.

Юнкăри вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен И.Г. Михалкина тата историпе обществознани предмечĕсене ертсе пыракан В.В. Краснова та грамотăсене тивĕçнисем хушшинче.

Çак темăна пленарлă пайра (вăл Калайкассинчи вăтам шкулта пулчĕ) район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та айккинче хăвармарĕ. Кунсăр пуçне Юрий Александрович вĕрентӳ системинче кашни педагогăн хăйĕн тивĕçне уçăмлăн ăнланса ĕçе кал-кал туса пымайсем пулаççĕ те. Вĕсем каланă тăрăх, попечительсен канашĕсен тĕллевĕсенчен пĕри вăйлă ертӳçĕсене, предпринимательсене те шкула явăçтарасси пулмалла.

Çул çитменнисен воспитанийĕ пирки, районта вĕсем тăвакан преступленисем нумайланни пирки те сăмах пулчĕ секцире. Районти шалăмăн ертӳçи Н.Г. Ванеркин тата Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн ертсе пыракан канашĕн председателĕ В.И. Кожанов хăйсен ĕçри опычĕпе паллаштарчĕç, çӳлерех асăннă канашсенче авторитетлă, пуçаруллă тата пулăшма пултаракан çынсем пулмаллине палăртрĕç. Шăпах çакнашкал çынсемпе пĕрле ĕçлесе пырсан шкулсен пурлăх базине пуянлатма ти ĕçсен пайĕн обществăри хăрушсăрлăх милицийĕн пуçлăхĕ В.А. Григорьев цифрăсемпе те паллаштарчĕ.

Çак темăна пленарлă пайра (вăл Калайкассинчи вăтам шкулта пулчĕ) район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та айккинче хăвармарĕ. Кунсăр пуçне Юрий Александрович вĕрентӳ системинче кашни педагогăн хăйĕн тивĕçне уçăмлăн ăнланса ĕçе кал-кал туса пымалли пирки те каларĕ. Вĕрентĕвĕн пурнăçри мĕн пур сферăри улшăнусенчен юлмалла мар, ĕлкĕрсе пымалла. Апла пулсан республикăри «Пирĕн çĕнĕ шкул» программăна пурнăçа кĕртсе пыма педагогсен хăйсене тĕллĕн те тăтăшах вĕренсе пымалла.

Иртнĕ çулсенчи пĕтĕмлетӳсемпе тата çак программăн çĕнĕлĕхсемсĕр пуçне Зоя Юрьевна кашни шкултах медицина пӳлĕмĕсем йĕркелемеллине те каларĕ. Вăл Раççей тата республика шайĕнче иртнĕ професси конкурсĕсенче палăрнисене тата олимпиадăсен призерĕсене хатĕрленĕ учительсене те асăнмасăр хăвармарĕ, малашнехи задачăсем çинче те чарăнса тăчĕ.

Пирĕн районти вĕрентӳ системи экономика кăтартăвĕсемпе республикăра малтисен ретĕнче пулманни ЧР Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствин пĕтĕмĕшле пĕлӳ аталанăвĕн пайĕн ертӳçи А.П. Михайлов тухса каланинче те курăнчĕ. Андрей Петрович çитес çултанпа пирĕн республика та Раççейри эксперимента хутшăнса шкулсенче тĕн ыйтăвĕсене вĕрентме пуçлассине пĕлтерчĕ.

Шкул ачисен сывлăхĕ пирки те сăмах пулчĕ конференцире. Район педиатрĕ М.П. Савельева пĕлтĕрхи тĕрĕслевсенче ачасем пурĕ 19,6 процент кăна сывă пулнине пĕлтерчĕ. Тĕрлĕ инфекци чирĕсене хирĕç кĕрешессипе вакцинацисем ирттернипе чирсем сарăлса каймаççĕ, анчах та ачасен куçĕсем япăх курни, кариес пулни тата çурăм шăммисем кукăрăлни самаях пăшăрхантарать. Çапла вара спортпа ĕç воспитанийĕ тата медицина пӳлĕмĕсем кирли мала тухать.

Хумхантаракан ытти ыйтусем тавра та калаçусем пулчĕç. Унпа пĕрлех иртнĕ вĕренӳ çулне пĕтĕмлетсе вĕрентӳ ĕçĕнче çитĕнӳсем тунисене грамотăсем парса чысларĕç. Районти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисене 4600793 тенкĕлĕх шкул оборудованийĕпе тата сĕтел-пуканпа тивĕçтерни çинчен калакан ЧР Перезиденчĕ ală пусса çирĕплетнĕ свидетельствăна пачĕç. Уйрăм педагогсенчен вара Ориннинти вăтам шкул учительне В.И. Алексеевана тата Йӳçкассинчи вăтам шкул учительне В.И. Тихонова Раççей шайĕнчи олимпиада призерĕсене хатĕрленĕшĕн интерактивлă оборудованипе тивĕçтересси çинчен пĕлтерсе свидетельствăсем пачĕç.

Çак ырă самантсене асра тытнипе пĕрлех çĕнĕ программăна пурнăçлассипе пайтах ĕçлемелле районти педагогсен.

Н. НИКОЛАЕВА.

Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче

Тавралăх хӳтĕлевçисене пăхса ӳстеретпĕр

Хальхи вăхăтра пирĕн тавралăхăн пахалăх шайĕ чакса пыни никамшăн та вăрттăнлăх мар пулĕ. Çитес вăхăтра экологи катастрофи умне çитсе тăрасси те иккĕленӳллĕ мар. Апла пулсан çынсен пурин те çут çанталăка, тавралăха сыхлама, упрама тăрăшмалла. Çак туйăма вара ачасенче шкул çулне çитичченех çуратас пулать. Мĕншĕн тесен шăпах 3–7 çулсенче ачасен хăй енлĕхĕн базисĕ çирĕпленет.

Пирĕн ача сачĕ 15 çул ĕнтĕ шкул çулне çитмен ачасене тăван тавралăхпа паллаштарас тата экологи воспитанийĕ парас тĕлĕшпе тарăннăн ĕçлесе пырать. Çак тапхăрта экологи воспитанийĕ енĕпе питĕ пуян материал пухма май килчĕ. Экологи енĕпе хамăрăн нумай çул хушши туса ирттернĕ ĕçсене тишкерсе эпир, педагогсем, уйрăм пĕтĕмлетӳсем тума пултартăмăр.

Пĕрремĕшĕ. Шкул çулне çитмен ачасене экологи воспитанийĕ парасси пулас гражданинăн характерне çирĕплетессин пĕр пайĕ мар, тĕп тытăмĕ, педагогика ĕçĕ-хĕлĕн никĕсĕ пулма тивĕç. Ача çут çанталăкпа тачă çыхăнсан кăна туллин аталанма пултарать.

Пирĕн ача сачĕ ялти вырăнта вырнаçнă пулин те, юлашки вăхăтра çавна асăрхама пулать. Ачасем ытларах чухне пушă вăхăта тулта, уçă сывлăшра мар, телевизор е компьютер умĕнче ирттерме тăрăшаççĕ. Паллах, вĕсем те паянхи информатизацине компьютеризаци тапхăрĕнче кирлех. Анчах та пурин те виçи пулмалла. Сăмахран, çут çанталăк пирки ӳкернĕ темĕнле лайăх видеофильм та ача çак илемлĕхе хăй чунĕпе, ăшĕпе чăнлăхра туйиннчен усăллăрах пулас çук.

Иккĕмĕшĕ. Экологи культурине çирĕплетнĕ май вĕрентӳ задачисене мар, нравственноçпа çыхăннисене малти вырăна кăлармалла. Урăхла каласан, ачан тăван çут çанталăка ăнланас туйăм çуралтăр тесен ăна тавралăх пирки конкретлă пĕлӳ пани кăна çителĕксĕр, ăна итлеме, туйма, лайăххине курма вĕрентес пулать: юр çăвать, хĕвел пăхать, асамат кĕперĕ тухрĕ, симĕс курăк ешерет, кайăксем юрлаççĕ, çурхи шыв шăнкăртатать, кĕрхи çулçăсем пăшăлтатаççĕ... Кашни ачара çут çанталăк тĕлĕшпе çынлăх тата эстетика туйăмĕсене аталантарасси – йывăр тата нумай вăхăта тăсăлакан ĕç. Вăл ача сачĕн ĕçĕхĕлĕнчен кăна мар, çемьерен, аслисен тĕслĕхĕнчен те нумай килет.

Виççĕмĕшĕ. Ача çут çанталăкпа çывăх пулни – сывлăх çулĕ. Çут çанталăк ачана ӳтпӳ тата психика тĕлĕшпе сывă ӳсме пулăшать. Вăл çынна сывлăх кӳрет. Çут çанталăкпа çывăх пулни çынна энерги парать, ĕçлес туйăм ӳсет, ывăнни иртсе каять.

Тăваттăмĕшĕ. Ачасене воспитани парас пулсан пирĕн пурин те – педагогсен, ашшĕ-амăшĕсен – хăйсен чунне тăван çут çанталăка юратассин туйăмĕпе, ырăлăхпа, телейпе, ĕмĕтпе пуянлатмалла. Çут çанталăка юратассипе чи малтан эпир ачасене хамăр тĕслĕх кăтартма тивĕç.

Çапла вара эпир ачасене экологи воспитанийĕ парассинче хамăрăн нумай çул хушшинче пухнă опытпа анлăн усă курма тăрăшатпăр.

К. МАРКОВА,
«Солнышко» ача сачĕн аслă воспитателĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: ача садĕнче пурнăç интереслĕ те пуян.

Граждансене йышăнаççĕ

«Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене сентябрь уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнмалли график

Хăш кун	Йышăнмалли вăхăт	Кам йышăнать
Сентябрĕн 1-мĕшĕ	13–15 сех.	Лилия Юрьевна ТАРАСОВА, политканаш секретарĕн çумĕ, район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ
Сентябрĕн 4-мĕшĕ	13–15 сех.	Николай Григорьевич ВАНЕРКИН, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, политканаш членĕ, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ
Сентябрĕн 8-мĕшĕ	13–15 сех.	Юрий Александрович ИВАНОВ, район пуçлăхĕ, «Единая Россия» партин вырăнти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ
Сентябрĕн 11-мĕшĕ	13–15 сех.	Станислав Степанович ИВАНОВ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕн В.А. Морозовăн пулăшаканĕ
Сентябрĕн 15-мĕшĕ	13–15 сех.	Владимир Аркадьевич КАЛИНИН, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, «Муркашри сĕт-çу завочĕ» акционерсен уçă обществин директорĕ, «Единая Россия» партие майлисен канашĕн председателĕ
Сентябрĕн 18-мĕшĕ	13–15 сех.	Игорь Васильевич НИКОЛАЕВ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ, политканаш членĕ
Сентябрĕн 22-мĕшĕ	13–15 сех.	Платон Павлович ДАВЫДОВ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, «Ударник» сăнавпа производство хуçалăх директорĕ, политканаш секретарĕн çумĕ
Сентябрĕн 25-мĕшĕ	13–15 сех.	Борис Васильевич АНДРЕЕВ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Муркаш райпо канашĕн председателĕ, политканаш членĕ
Сентябрĕн 29-мĕшĕ	13–15 сех.	Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ, политканаш членĕ

Пиллĕкмĕш ĕç чĕрĕкĕ

Ачасен сывлăхĕ – чи хаклă тупра

Çуллахи вăхăтра ачасен канăвне йĕркелесси – питĕ ответлă та кирлĕ ĕç. Çавăнпа та Тойкилтĕри вăтам шкулта лагерьсем уçас ыйту çине уйрăмах тимлĕ пăхаççĕ. Кунта кашни çулах темиçе сменăпа тĕрлĕ лагерь ĕçлет.

Акă август уйăхĕнче каллех ачасене «Олимпионики» сывлăха çирĕплетмелли лагерь йыхравларĕ. Кунта ытларах спортпа туслă ачасем пухăнчĕç. А.В. Васильевпа С.М. Яников воспитательсем ачасен сывлăхĕ çирĕплентĕр, вĕсен вăхăчĕ усăллă ирттĕр тесе чунтан тăрăшаççĕ. Шкул директорĕ И.А. Сергеев та ачасен кану условийĕсемпе интересленсех тăрать.

Лагерьти кашни кун ирхи зарядкăран пуçланать. Кайран вара – тĕрлĕ спорт вăйăсем, ăмăртусем, конкурс-викторинăсем.

Пуриншĕн те уйрăмах асра юлни вара Атăл хĕррине икĕ кунлăх çул çӳреве кайса килни пулчĕ. Илемлĕ те хĕвеллĕ кун автобус Ильинка-Шашкар тăрăхне çитсе чарăнчĕ. Суйласа илнĕ вырăна ачасем малтанах тирпейлем кĕртрĕç, кăвайт чĕртме хăрăк туратсем пуçтарчĕç. Техĕмлĕ яшка пĕçерсе çирĕç.

Чăваш енри чи ватă юман патĕнче те (вăл 475 çулта иккен!) пулчĕç. Ильинка шкулĕн вĕрентекенĕ Игорь Александрович Каргин экскурси ирттерчĕ, юман историне интереслĕ каласа пачĕ. Кунсăр пуçне ачасем туя, карели хурăнĕсем çине те кăсăклансах пăхрĕç. Илемлĕ тавралăхпа паллаштарнăшăн И.А. Каргина пысăк тав.

«Олимпионики» лагерьсĕр пуçне шкулта «Çут çанталăкăн çамрăк тусĕсем» профиль лагерĕ те ĕçлет. Кунта çӳрекенсен те кичемленсе ларма вăхăт çук.

Кăçал çу тăршшĕпех Тойкилтĕ шкулĕнче вĕренекен ачасенчен çурри ытла шкул çумĕнчи лагерьсенче канса сывлăхне çирĕплетме пултарчĕ. Ачасен сывлăхĕ вара – чи хаклă тупра, мĕншĕн тесен вĕсем – пирĕн малашлăх.

Л. СЕРГЕЕВАПА
С. ВАСИЛЬЕВА
вĕрентекенсем.

Тойкилтĕ шкулĕ.